Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**.
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – **www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства.

## Автор: Людмила Николаева

## Книга: Пĕчĕк туссем

## Стихотворение: «Паттăр» Ваçук

Вăрманпа пырать Ваçук,
Уншăн нимле чару çук.
Ак шăтарчĕ хурăна,
Куççуль тулчĕ сурана.
Амантса вĕренене
Чĕрсе çырчĕ хăй ятне.
Туратсем çине-çине
Йĕрсе ӳкрĕç çĕр çине.
Чулпа печĕ пакшана,
Канаймарĕ тăмана,
Йăва вĕçрĕ çĕрелле –
Тата мĕскер кĕтмелле?
Пурте тарчĕç хăраса,
Пурте ларчĕç пытанса.
Ваçук вара ахăрать,
Умра мĕн пур – тустарать.
Ай тур-тур, ай тур-тур-тур,
Чăн-чăн «паттăр» – пыр та кур!
Çак мăшкăла кам чăтать?
Юман чунĕ тăвăлать –
Çаклатать вăл вĕçкĕне,
Çĕклет çӳле – тӳпене.
Хытă-хытă чăмăртать,
Чăмăртать те ăс парать:
«Курман кун пекки хальччен,
Эпир йышлă – эс пĕччен.
Пирĕнпе туслашмасан
Хăвшăн ху пулан тăшман.
Вăрманта эсĕ хăна,
Асăнта тытсам çакна:
Кăткă йăвине ан ват,
Çĕмĕрт чечекне ан тат!
Кĕркунне ырла-ырла
Юратса çийĕн çырла.
Тĕрлĕ-тĕрлĕ кăмпасем
Тухĕç сан ума хăйсем.
Кĕсье тулли мăйăрпа
Кайăн тулли кăмăлпа...»
Кайран, пит пĕлес килсен,
Ача улшăнчĕ тĕпрен.
Сирĕн хушăра, туссем,
Пур-и пуçтах Ваçуксем?
Çак «паттăр» сăвăра çеç юлтăр!
Пур çын вăрман юлташĕ пултăр!

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.

Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.